# Ăса вĕрентет

Пурнăçра тепĕр чухне пулать çав. Каччине хĕр çав тери юрататать, ăна шанать. Лешĕ вара çав вăхăтра темиçешĕ патне те çӳреме ĕлкĕрет. Вара авланать те çав тери юратаканни хăйĕн савнийĕсĕр тăрса юлать. Хĕр вара урăх качча каймасть.

Çавăн çинчен çырса кăтартать те Василий Петров хăйĕн «Ват хĕр» калавĕнче («Тăван Атăл», 3 №, 2014).

Çирĕм çулхи Лена Андрее юратать. Иккĕшĕ те пĕр ялта, пĕр шкулта вĕреннĕ. Андрей хĕртен 2 çул аслăрах. Калав Лена ятĕнчен пырать. Вăл хăй çинчен каласа панă пек.

«Пĕр-пĕрне ачаранах лайăх пĕлнĕрен туссемччĕ. Çуркуннепе пĕрле юрату та килчĕ. Эпĕ Андрее пĕтĕм чунтан-вартан килĕштерсе пăрахрăм. Чăн та, вăл питĕ курăмлă, хӳхĕм йĕкĕтчĕ. Сăн-пуçран та хитреччĕ, пĕвĕ-сийĕ яштакаччĕ», – аса илет Лена.

Шкул хыççăн Андрее салтака илеççĕ. Çартан та Лена патне тăтăшах çыру çырса тăнă. Вĕсене Лена пуçтарса пынă. Салтакран таврăнсан Андрей электромеханика техникумне вĕренме кĕрет. Шкул хыççăн Лена Шупашкарти пир-авăр комбинатĕнче ĕçleme пуçлать. Иккĕшĕ те Шупашкарта пурăнма тытăнаççĕ.

Андрей ăна качча илетех тесе хăйне йăпатать Лена. Çуралнă кунне савнине те чĕнет. Пурте ăна саламласа парнесем параççĕ. «Андрей мĕн парĕ-ши?» – шухăшлать Лена. Анчах та Андрей питĕ кая юлса килет, тата пĕр парнесĕр.

Тантăшсем саланса пĕтсен Андрей хăюлланса каять. «Мана, çинçешке кĕлеткеллĕскере, алă çинче йăтса çӳрерĕ, çав вăхăтрах антăхтарса ямалла вăрăммăн чуп тăва-чуп тăва илет. Вара эпĕ нихăçан та тĕлленмен ĕлккен тĕлĕк тапранчĕ. Тахăш самантра чунăм та ăшран вĕçсе тухса тарнăн туйăнчĕ...

...Пĕр шутласан, хĕрлĕхе çухатни ӳкĕнмеллипех ӳкĕнтерет, пите пĕçертет. Çав хушăрах хĕр чысне никама та мар, хампа варлă пурнакан савнине кăна халаллани мана хам умра тӳрре кăларса пĕтĕм чуна çăмăллантарса ячĕ. Çав самантра Андрей мана тĕнчери чи çывăх та чăн хаклă çын пек туйăнса кайрĕ. Эпĕ ăна ĕмĕрне те юратма пăрахас çуккине ăнланса илтĕм». Çапла Лена улталанса юлать.

– Андрюш, – терĕм ăна шахвăртса, – вăхăт иртсе пырать. Эпĕ акă çирĕм урлă каçрăм. Эсĕ çаплах нимĕн те шарламастăн.

Ман Андрей хаш-хаш сывласа илчĕ: «Эпĕ халь авланма шутламан-ха».

Çапла, пĕр-пĕрне юратаççĕ пулсан та хĕр тенин юратнă каччипе вăхăт çитмесĕрех çывăрмалла мар çав. Çакă Ленăн нихçан тӳрленмелле мар йăнăшĕ пулчĕ.

Андрей часах авланать. Ленăна качча илмест.

Çакăн хыççăн улталанни тÿсме çук хуйхăрать.

Санюк ятлă юлташĕ Ленăна Таниле ятлă арçынпа паллаштарать. Анчах та Лена Андрея манаймасть. «Енчен те Андрейĕн, Таниленни пекех арăмĕ вилес пулсан, эпĕ ăна виç-тăват ачаллăскерне, качча тухма хатĕр. Эпĕ унăн ачисене хамăн ачасене пăхнă пек юратса пăхнă пулăттăм», – шухăшлать Лена.

– Эпĕ анчах ухмаххи, ку тарана çитсе те сана юратнă пек каччă тупаймарăм. Юратнă çын тĕлне пулмасăр ват хĕре тăрса юлтăм, – терĕ Лена Андрее тĕл пулсан нумай вăхăт иртнĕ хыççăн.

– Апла мана хытă юрататăн пулсан, мана качча тухатăн-и? – ыйтрĕ сасартăк Андрей. Арăмĕ чирлесе вилнĕ пулнă. Андрей вăл вăхăтра пĕччен пурăннă...

Калава вулама тытăнсан вĕçне çитмесĕр чарăнма çук. Автор Ленăна та, Андрее те питĕ анлăн сăнласа парать. Чĕлхи пуян. Кашни сăмаха кирлĕ пек вырнаçтарма пĕлет. Калав çамрăксемшĕн питĕ те усăллă. Унăн воспитани пĕлтерĕшĕ çав тери пысăк. Ытларах çамрăк хĕрсене качча кайиччен хăйсене мĕнле тытмаллине вĕрентет.

Лена питĕ сăпайлă хĕрарăм. Хăй çамрăкла йăнăш тунишĕн ÿкĕнет. Кулянни те, макăрни те ăна пулăшаймасть. Авланнă, ачасемлĕ арçынна качча тухиччен ĕмĕр пĕччен пурăнма тĕв тăвать...

**Виктор СИМАКОВ,**

**Тутарстан, Аксу районĕ, Меречен.**

# Малалли шăпи мĕнле-ши?

Эпир чăваш кăларăмĕсене вулама юрататпăр, çавăнпа «Тăван Атăл», «Капкăн» журналсем, «Хыпар» тата «Тăваньен» хаçатсем çырăнса илетпĕр. Ирхине почтальон килсен арăмпа, Людмила Николаевнăпа, черетпе вĕсене пăхса тухатпăр, кайран, пушă вăхăт тупăнсан, тĕплĕн вулатпăр, сÿтсе яватпăр.

Пире «Тăван Атăл» журналăн кăçалхи 3-мĕш номерĕнчи Василий Петров çырнă «Ват хĕр» калав çав тери килĕшрĕ. Хамăр та общежитисенче тертленсе курнăшăн та пулĕ çывăх, чăн пулнă пек туйăнчĕ. Автор хĕр чунне ăнланса çырма пултарнă. Пĕр вулама тытăнсан – чарăнма çук – вĕçне çитиех вуласа тухатăн. Çапах тĕп сăнар çавăн чухлĕ терт, нуша курса асапланса пурăнсан та телейлĕ пулмасан тĕрĕс мар пек. В. Петровран калавăн малалли пайне çырма ыйтас килет, Лена телейпе савăнса пурăннине курасчĕ.

Сире хисеплесе Тутар Республикинчи Теччĕ районĕнчи Пухтел ялĕнче çуралса ÿснĕ, халĕ Шупашкар районĕнчи Çĕньялта пурăнакан

**Юрий ДОЛГОВ.**

*Кĕскен хам çинчен:*

*1983 çултанпа Çĕньялта пурăнатăп. «Кадыковский» совхозра ферма ертÿçинче, тĕп зоотехникра, Çĕньял администрацийĕн пуçлăхĕнче ĕçлерĕм. Халĕ – пенсионер.*